26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1945 ДЕКАБРЬ 12 ЮНКУН 241 (6992) №

# Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) Обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн, ЧАССР Верховнăй Совечĕн тата Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

## СУЙЛАВ ЯЧĔПЕ

Пирĕн çĕршыври государство влаçĕн аслă органне—СССР Верховный Советне суйлама хатĕрленнĕ май ĕçсыннисен политикăллă активлăхĕ татах та хăватлăнрах хумханса ÿсрĕ.

Хамăрăн Тăван çĕршывăмăра, унăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхне, Сталинла Конституци панă ырлăхсемпе тивлетсене чи хаяр вăрçăра чи тискер тăшманран хÿтĕлесе хăварнă хыççăн Совет Союзĕнчи халăхсем мирлĕ строительство ĕçне тытăнчĕç. Вут-çулăм витĕр тухнă паттăр воинсенчен нумайĕшĕсем, киле таврăнса, фабрикăсемпе заводсенчи, колхозсенчи ĕçченсен ретне тăчĕç. Вĕсен ĕçшĕн тунсăхласа çитнĕ аллисем çĕршыв вăйхăватне малалла ÿстерсе пыраççĕ. Пĕтĕм халăх хĕруллĕ те пултаруллă ĕçне пуçăнать. Вăрçăпа арканнă хуçалăха пирĕн кĕске вăхăтрах юсаса ура çине тăратмалла, хамăрăн юратнă çĕршыва тата хăватлăрах та пуянрах, культурăллăрах та илемлĕрех туса хумалла.

Пирĕн чи демократиллĕ çĕршывра 1946 çулхи февралĕн 10-мĕшĕнче тĕнчери чи демократиллĕ суйлав пулса иртет. Çав кун совет халăхĕ хăйĕн пурнăçĕпе кун-çулне çĕршывăн чи лайăх ывăл-хĕрĕсен аллине шанса парать. Акă мĕншĕн ĕнтĕ мĕнпур халăх çав аслă суйлава пĕтĕм чун-чĕререн хавхаланса хатĕрленет! Хăйĕн яланхи революциллĕ традицийĕ тăрăх халăх çав суйлав кунне пур ĕçре те çĕнĕ çитĕнÿсем тунипе кĕтсе илме ĕмĕтленет.

Нумаях пулмасть Томск чугун çулĕ çинче ĕçлекенсем çĕршывра халĕ сарăлса пыракан политикăллă чи пысăк кампани ячĕпе—Верховный Совета суйлас ятпа Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва татах та ытларах вăйлатма чĕнсе каларĕç. Çак чĕнĕве чугун çулсем çинче ĕçлекенсем çеç мар, халăх хуçалăхĕн пур ĕçĕсенчи работниксем те хастаррăн йышăнса илчĕç. Ĕçсыннисем пур çĕрте те пысăк ĕç тухăçлăхĕн çĕнĕрен-çĕнĕ паха тĕслĕхĕсене кăтартса параççĕ. Халăх пуçарулăхĕн çăлкуçĕ иксĕлми хăватлăн тапса тăрать. Эпир Горький хулинчи Молотов ячĕпе тăракан автозаводри Куратовпа Загорный тимĕрçĕсен чаплă ĕçĕсем çинчен пĕлтĕмĕр.

Совет демократийĕ совет çыннине пĕтĕм чун-чĕрери пултарулăха кăтартса ĕçлеме анлă çулсем уçса пачĕ. Халиччен палăрмасăр тăнă çĕнĕрен-çĕнĕ вăйсем хускалса ĕçе кĕреççĕ.

Суйлав умĕнхи хĕруллĕ ăмăрту пирĕн Чăваш республикинче те сарăлсах пырать. СССР Верховный Советне суйлама хатĕрленнĕ май Етĕрне районĕнчи колхозниксемпе колхозницăсем Сталинла Конституци кунĕ тĕлне планран ирттерсе Хĕрлĕ Çар фондне 19.250 пăт тырă хывrĕç. Халĕ ку ĕç районра малалла пырать. Шупашкар районĕнчи колхозсем, государство умĕнчи хăйсен обязательствисене тултарнă хыççăн, çĕнтерÿ фондне 300 тонна тырă пачĕç. Ку районри Молотов ячĕпе тăракан колхоз, планран ирттерсе, 1500 пăт панă. Çавăн пекех Красноармейски районри «Малалла» колхоз Хĕрлĕ Çар фондне планран ирттерсе 2.300 пăт, «12 лет Октября» колхоз—1.400 пăт, «Красное Сормово» колхоз—1300 пăт панă. Вăрçă хыççăн хуçалăха юсас ĕçре тырпул мĕнле паха вырăн йышăнса тăнине колхозниксем ăнланаççĕ, çавăнпа вĕсем Тăван çĕршывшăн нимĕн те хĕрхенсе тăмаççĕ.

Промышленноçра та ăмăрту вăйлансах пырать. Кошелев юлташ директор пулса ĕçлекен заводăн коллективĕ, çулталăкри производство программине Сталинла Конституци кунĕ тĕлне тултарса, халĕ çĕнĕ çулччен тата суйлав кунĕ çитиччен çĕнĕ çитĕнÿсем тăвассишĕн кĕрешет. Улатăр деповĕнчи Голованов юлташ ертсе пыракан паравозсен бригади техникăллă хăвăртлăха 3—4 километр ытларах ирттерет, кашни паровоза талăкри нормăпа пăхнинчен 10 километр ытларах çÿретет.

Нимĕçсем аркатса хăварнă районсенчи колхозсемпе предприятисене юсама йывăç нумай кирлĕ. Вăрман ĕçĕнче те суйлав умĕнхи ăмăрту анлăн сарăлчĕ. Акă, Йĕпреç районĕнчи Киров ячĕпе тăракан колхозăн план тăрăх вăрмана 2 çын çуран, 2 çын лашапа ямалла пулнă пулсан, паянхи куна ку колхозран 24 çын çуран, 12 çын лашапа ĕçлеççĕ. Ку районри «Красный водник» колхоз та вăрмана 22 çын çуран, 9 çын лашапа ĕçлеме янă. Колхозниксемпе пĕрле вăрманта колхоз председателĕ А. Теплов юлташ хăй те ĕçлет. Дубровăри вăрман пункчĕ вăрманта ĕçлекенсене ăшă та таса общежитисене вырнаçтарнă. Вăрман пункчĕн начальникĕ Шугуров юлташ тата унти агитаторсем рабочисем хушшинче каçсерен докладсемпе калаçусем ирттереççĕ, суйлав законĕсене ăнлантарса параççĕ. Вăрманта уйрăмах Çĕрпÿ районĕнчи «Октябрь» колхозран пынă Отечественнăй вăрçă инвалидĕсем В. Викторовпа И. Михеев юлташсем тăрăшса ĕçлеççĕ. Вĕсем хăйсен кулленхи нормисене 150—155 процент таран тултарса пыраççĕ. Вăрман хатĕрлес енĕпе çавăн пекех Ишлей районĕнчи Анаткас Марка тата Тăрăн ял Совечĕсем те аван ĕçлеççĕ.

Анлăн сарăлса кайнă мирлĕ строительство ĕçне çителĕклĕ укçа-тенкĕ парса тăрасси—финанс органĕсен, ял Совечĕсен чи пысăк задачисенчен пĕри пулса тăрать. Суйлав умĕнхи ăмăртăва хутшăнса, Çĕрпÿ районĕнчи финанс работникĕсем укçа-тенкĕ пухмалли IV-мĕш квартал планне декабрĕн 1-мĕшĕ тĕлнех ирттерсе тултарчĕç. Халĕ вĕсем хăйсен ĕçĕнчи çĕнĕ çитĕнÿсемшĕн кĕрешеççĕ. Укçа-тенкĕ пухас тĕлĕшпе çавăн пекех Сĕнтĕрвăрри, Вăрнар, Красноармейски, Чурачăк, Елчĕк, Муркаш, Ишлей районĕсем лайăх ĕçлеççĕ. Анчах пирĕн кая юлса пыракансем те сахал мар-ха.

Тăваттăмĕш кварталти финанс планне хăвăртрах тултарас, çак ĕçе пĕтĕм общественноçа мобилизацилес шутпа, парти Обкомĕн бюровĕ ноябрĕн 25-мĕшĕпе декабрĕн 25-мĕшĕ хушшинче уйăхлăх ирттерме йышăннăччĕ. Çак уйăхлăхра финанс работникĕсем хушшинчи суйлав умĕнхи ăмăртăва анлăнрах сармалла, кăçалхи IV-мĕш кварталти финанс планне ăнăçлăн тултармалла.

Пур çĕрте те хĕрÿ ĕç, халăхăн иксĕлми пултарулăхĕпе пуçарулăхĕ вĕресе тăтăр! Вăхăчĕ те халь—хĕрÿ вăхăт. Суйлав умĕнхи ăмăртăва хутшăнса, республикăри кашни предприяти, кашни промартель хăйĕн кăçалхи производствăллă планне ăнăçлăн тултартăр, çĕнĕ, 1946 çултан пуçласа Сталинла 4-мĕш пилĕкçуллăх планне пурнăçа кĕртме хастаррăн тытăнтăр! Колхозсем, кăçалхи ĕçсене туса çитерсе, килес çулхи вăйлă тырпулшăн кĕрешĕве тухчăр!

СССР Верховный Советне суйламалли куна мирлĕ строительствăри пур ĕçре те çĕнĕ чаплă çитĕнÿсем тунипе кĕтсе илер!

## Çĕршыв СССР Верховный Советне суйлама хатĕрленет

### Комсомолецсемпе çамрăксем суйлава хатĕрленеççĕ

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ. Районри колхозсенче суйлав Положенине вĕренес ĕçе лайăх организациленĕ. Ку ĕçе уйрăмах комсомолецсемпе çамрăксем хушшинче йĕркеллĕ туса пыраççĕ. Çамрăк суйлавçăсене суйлав законне вĕрентес тĕлĕшпе 280 комсомолец агитатор тата 10 комсомолец агитколлектив руководителĕсем пулса ĕçлеççĕ. Положение кружоксенче вĕреннисĕр пуçне час-часах çамрăк суйлавçăсен пухăвĕсене, вечерĕсене туса ирттереççĕ. Акă, Сарапайри агитколлектив çамрăк суйлавçăсемпе виçĕ хутчен вечер туса ирттернĕ. Вăл вечерсенче 150 çын ытла пулнă. Унта докладсемпе калаçусем ирттернĕ, художествăллă пултарулăх кружокĕсем постановкăсем, концертсем панă. Шкул ачисем Сталинла Конституци çинчен çырнă сăвăсем каласа панă, çĕнĕ юрăсем юрланă.

Район центрĕнчи çамрăк суйлавçăсем те виçĕ вечер ирттернĕ. Унта парткабинет заведующийĕ И. Квартиров юлташ «Сталинла Конституци—тĕнчере чи демократиллĕ Конституци», «СССР Верховный Совечĕ—государствăн чи аслă влаçĕ» тата ВКП(б) райкомĕн агитаципе пропаганда пайĕн пуçлăхĕ Р. Григорьев юлташ «ССР Союзĕн суйлав законĕ» темăсемпе докладсем туса панă. Нумай суйлавçăсем Сталинла Конституци панă правасемпе хăйсем мĕнле усă курни çинчен тухса каланă. Юлашкинчен спектакль тата физкультурниксен выступленийĕсем пулнă.

Халĕ нумай комсомолецсем суйлав участокĕсенче ĕçлеççĕ. Суйлав пулмалли çуртсене илемлетме лозунгсемпе плакатсем çыраççĕ. «Путь социализма» колхозри комсомолецсем сасăламалли пÿлĕмсене йĕркелес, кирлĕ хатĕрсем тупас тĕлĕшпе ĕçлеççĕ. Ятарласа уйăрнă комсомолецсем ял Совечĕсене суйлавçăсен списокĕсене тума пулăшаççĕ.

Комсомол организацийĕсем участоксенчи суйлав комиссийĕсен составне кандидатсем тăратас ĕçе те хастарлăн хутшăнаççĕ. Суйлав комиссинче ĕçлеме ĕçре тĕрĕсленĕ, политика енчен хастар комсомолецсене кандидата тăратаççĕ. Паянхи куна комсомол организацисем 32 комсомолеца участоксенчи суйлав комиссийĕсен составне кандидат тăратнă.

М. ГАЛКИНА,
ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ.

### Округсенчи суйлав комиссийĕсен председателĕсемпе секретарĕсен канашлăвĕ

Декабрĕн 10-мĕшĕнче, Шупашкарта, СССР Верховный Советне Чăваш АССРĕнчен депутатсем суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен округсенчи суйлав комиссийĕсен председателĕсемпе секретарĕсен канашлăвĕ пулса иртрĕ.

Канашлăва Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ З. А. Андреева юлташ председатель пулса ертсе пычĕ.

Канашлу икĕ ыйту—округсенчи суйлав комиссийĕсен ĕçĕсем çинчен тата суйлав кампанийĕ вăхăтĕнче çыхăну ĕçне йĕркелесси çинчен сÿтсе яврĕ.

Малтанхи ыйтупа ВКП(б) Обкомĕн секретарĕ Павлов юлташ доклад туса пачĕ. Вăл округсенчи суйлав комиссийĕсен практикăллă ĕçĕсем çинчен чарăнса тăчĕ, организациллĕ ĕçсен тапхăрĕ, «хускалу» тапхăрĕ вăраха тăсăлнине палăртрĕ, суйлава хатĕрленес пĕтĕм ĕçе халех анлăн сарса яма кирлине асăрхаттарчĕ.

Иккĕмĕш ыйтупа—суйлав кампанийĕ вăхăтĕнче çыхăну ĕçне йĕркелесси çинчен республикăри çыхăну управленийĕн начальникĕ Воронин юлташ доклад туса пачĕ. Ку енĕпе тумалли ĕçсем питех те нумай-ха. Суйлава ăнăçлăн хатĕрленсе ирттерме май парас тесен, çыхăну ĕçне Шупашкартан пуçласа чи инçетри ялти телефон аппарачĕ патне çитиччен тĕпренех лайăхлатмалла.

Канашлура Чăвашпотребсоюз правленийĕн председателĕ Терентьев, Союз Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен 372-мĕш Канаш суйлав округĕнчи комисси председателĕ Киреев юлташсем сăмах тухса каларĕç.

Юлашкинчен ВКП(б) Чăваш Обкомĕн секретарĕ И. М. Чарыков юлташ сăмах тухса каларĕ. Вăл хăйĕн сăмахĕнче округсенчи суйлав комиссийĕсем умĕнче паянхи кун тăракан практикăллă задачăсене кăтартса пачĕ.

### Участоксенчи суйлав комиссийĕсен составне кандидатсем тăратаççĕ

ЕЛЧĔК РАЙОНĔНЧЕ

Участоксенчи суйлав комиссийĕсен составне кандидатсем тăратас ĕç Елчĕк районĕнче активлăн пулса иртет.

«Хунав» колхозри колхозниксен пухăвĕ участокри суйлав комиссийĕн составне Сильвестр Капитонович Носов юлташа кандидата тăратма йышăннă. Носов юлташ нумаях пулмасть Хĕрлĕ Çар ретĕнчен демобилизаци шучĕпе таврăннă. Правительство ăна Ленин орденĕпе, Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕпе, «За отвагу», «За боевые заслуги», «Берлина илнĕшĕн» медальсемпе наградăланă. Вăл Мускавра Çĕнтерÿ парадĕнче пулнă. Çав колхозри колхозниксен пухăвĕнчех ВКП(б) членне Павел Никитич Никитин юлташа кандидата тăратнă. Вăл нумаях пулмасть демобилизаци шучĕпе Хĕрлĕ Çартан таврăннă. Хĕрлĕ Çарта ăна Хĕрлĕ Çăлтăр, III-мĕш степень Мухтав орденĕсемпе, «За боевые заслуги», «За отвагу» медальсемпе наградăланă.

«Марс» колхозри колхозниксен пухăвĕ колхоз председательне Абдул Гаязович Гаязов юлташа кандидата тăратма йышăннă. Гаязов юлташ колхоз пуçланнăранпах колхоз председателĕ пулса ĕçлет. Колхоза лайăх ертсе пынăшăн ăна «Хисеп палли» орденпа тата «Социализмла ялхуçалăх отличникĕ» паллăпа наградăланă.

Крахмал заводĕнчи рабочисемпе служащисен коллективĕ заводри подсобнăй хуçалăх заведующине Раиса Николаевна Агеева комсомолкăна кандидата тăратнă.

Ворошилов ячĕпе тăракан колхозри колхозниксем паллă колхозницăна, «Социализмла ялхуçалăхĕн отличникĕ» паллине илнĕ Агрипина Константиновна Казакова юлташа кандидата тăратнă.

ОКТЯБРЬСКИ РАЙОНРА

Районри колхозсемпе учреждениесенче участокри суйлав комиссийĕсен составне кандидатсем тăратас ĕç вĕçленсе пырать. Ĕçсыннисем участоксенчи суйлав комиссийĕсен составĕсене шанчăклă, ĕçлеме пултаракан çынсене тăратаççĕ.

Районри коммунистсен организацийĕнчен участокри суйлав комисси составне Степан Яковлевич Яковлев юлташ кандидатурине тăратнă. Вăл районри малта пыракан «Звезда» колхоз председателĕ пулса ĕçлет, Чăваш АССР Верховный Совет депутачĕ. Колхоза лайăх ертсе пынăшăн ăна Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăланă.

«Правда» колхозри колхозниксен пухăвĕ, пĕр саслă пулса, Емельян Гаврилович Охильков колхозника кандидата тăратма йышăннă. Охильков юлташ «За отвагу» медаль илсе нумай пулмасть Хĕрлĕ Çартан таврăннă. Хĕрлĕ Çара каиччен вăл колхоз председателĕ пулса ĕçленĕ.

Ускасси ял Совечĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхозри колхозниксем Емельян Николаевич Чурмаков юлташ кандидатурине тăратнă. Чурмаков юлташ колхоз председателĕ пулса ĕçлет. Колхоза лайăх ертсе пынăшăн Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕ ăна Хисеплĕ грамота парса наградăланă.

Пуçламĕшпе вăтам шкулсенче ĕçлекенсен профсоюзĕн районри организацийĕ Яков Игнатьевич Хлебников юлташа кандидата тăратнă. Хлебников юлташ Шанарпуçĕнчи сичĕ çул вĕренмелли шкул директорĕ пулса ĕçлет. Хĕрлĕ Çар ретĕнче вăл «За отвагу» медаль илме тивĕçлĕ пулнă. Асăннă профсоюз райкомĕ çавăн пекех Шĕнерпуçĕнчи вăтам шкул учительницине, ВКП(б) членне Александра Кузьминична Руденко юлташа кандидата тăратнă.

### Национальноçсен Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен 555-мĕш номерлĕ Шупашкар суйлав округĕн комиссийĕ ПĔЛТЕРНИ

Национальноçсен Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен 555-мĕш Шупашкар суйлав округ комиссийĕ Шупашкар хулинчи Хресчен çуртĕнче 10-мĕш пÿлĕмре вырнаçнă. Унăн адресĕ çапла: г. Чебоксары, Дом колхозника, ком. № 10. Телефон № 2—23.

### ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

**Ф. А. КЛИМОВ ЮЛТАША ЧĂВАШ АССР-ĕн ВЫРĂНТИ ПРОМЫШЛЕННОСТЬ ХАЛĂХ КОМИССАРĔ ПУЛСА ĔÇЛЕМЕ ЛАРТАССИ ÇИНЧЕН**

Федор Алексеевич Климов юлташа Чăваш АССР-ĕн Вырăнти промышленность Халăх Комиссарĕ пулса ĕçлеме лартас.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ З. АНДРЕЕВА.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ИЗМАЙЛОВ.

Шупашкар хули, 1945 çулхи декабрĕн 11-мĕшĕ.

### КОЛХОЗСЕМ ВĂРЛĂХСЕНЕ ТĔРĔСЛЕТТЕРЕÇÇĔ

ИШЛЕЙ. 1945 çулхи ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлă вĕçленĕ колхозсем 1946 çулхи çуракине хатĕрленме тытăнчĕç. Паллах, çуракинче чи малтан кирли, чи хакли вăл—вăрлăх пулать.

Çавăнпа та «Красный Октябрь», «Эстафета», «Серп и Молот», «Большевик» тата ытти колхозсем хăйсен вăрлăхĕсене тĕрĕслеттерме тытăннă. Районри вăрлăхсене тĕрĕслекен лабораторинче (заведующийĕ Леонтьев юлташ) вăрлăхсене кулленех тĕрĕслеççĕ.

Анчах чылай колхозсем авăн çапса пĕтерменни çине ярса хăйсен вăрлăхĕсене тĕрĕслеттерме васкамаççĕ. Çавăн пирки ĕнтĕ районĕпе 12 колхоз çеç анализ тума вăрлăхсем леçсе панă.

В. ЧИГАРКИН.

### Выльăх-чĕрлĕхшĕн тăрăшаççĕ

СОВЕТСКОЕ. Çак юлашки çулсенче Уйкас-Турайри «Металлист» колхоз общественнăй выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе чылай лайăхлатрĕ. Çамрăк выльăхсене кунта тĕрĕс-тĕкĕл пăхса ÿстереççĕ.

Выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхĕ те ÿссе пырать. 6 çул хушши таварлă сĕт-çу фермипе ĕçлекен С. Ильина кашни ĕнерен çулталăкра 11.000 литр сĕт суса илмелле пулсан, 12.000 литр суса илнĕ.

Фермăсенче ĕçе юрататакан опытлă колхозниксем ĕçлеççĕ. Вĕсем выльăх-чĕрлĕх йышне чакармаççĕ. Выльăх витисене вăхăтра тасатса тăраççĕ, выльăхсене вăхăтра апатлантарса шăвараççĕ.

Ферма çурчĕсем пурте юсавлă, ăшă та таса. Витесем çывăхĕнчех шыв та пур. Выльăхсене хĕл каçарма кирлĕ таран апат хатĕрленĕ. 250 тонна силос хывса хăварнă. Армутипе тирпĕтнĕ вĕлтĕрен те пур.

Ĕне фермисĕр пуçне, ытти фермăсенче пуринче те выльăхсем планпа палăртнă чухлех пур. Халĕ ĕне фермине комплектласа çитерес шутпа пăрусем туянаççĕ.

Колхоз государствăна выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем памалли плана тултарнă, 1946 çулшăн 7,4 пентнер аш-какай панă.

(Хамăр корр.).

## Совет çĕршывĕ тăрăх

### ПАВЛОВ КУНĔСЕНЕ ИРТТЕРМЕ ХАТĔРЛЕНЕÇÇĔ

Декабрĕн 7-мĕшĕнче СССР Медицина наукисен академийĕн, Пĕтĕм Союзри физиологсен обществин тата Мускаври физиологсен обществин пĕрлешнĕ оргкомитечĕн ларăвĕ пулса иртнĕ. Вăл ларăва аслă вырăс физиологĕ И. П. Павлов вилнĕренпе 10 çул тултарнине палăртса хăварас шутпа пухнă. Ларăва Медицина наукисен академийĕн действительнăй членĕ И. П. Разенков ертсе пынă. Оргкомитет хăйĕн ларăвĕнче килес çулхи февраль уйăхĕнче 4 кунлăх научнăй сесси туса ирттерме йышăннă.

Павлов ученикĕсем Павлов шкулĕ юлашки вунă çул хушшинче тунă ĕçсене пĕтĕçтерсе парĕç. (ТАСС).

### МИЛЛИОН КУÇКĔСКИ

Строительство материалĕсен Халăх Комиссариачĕн предприятийĕсем халăха валли ытларах та ытларах куçкĕски туса кăлараççĕ.

Горькири кĕленче завочĕ çĕнĕ йышши илемлĕ куçкĕскисем туса кăларма тытăннă. Кунта туса кăларакан куçкĕскиен рамине çĕмĕрĕлмен кĕленчерен тăваççĕ.

Çавăн пекех тата Гомельри, Ирбитри, Мишеронри, Константиновкăри тата Гусь-Хрустальнăйри заводсем те куçкĕскисем туса кăларма тытăннă.

IV-мĕш кварталта пĕр миллиона яхăн куçкĕски туса кăлармалла. (ТАСС)

### ВЫРĂССЕН ПĔРРЕМĔШ БИБЛИОТЕКИ

Ленинградри Салтыков-Щедрин ячĕпе тăракан государство библиотекинче библиографи отделĕн заведующийĕ Куфаев профессор Киев хулинче Ярослав Мудрый вырăссен пĕрремĕш библиотекине тунăранпа 900 çул тултарни çинчен доклад туса панă.

1037 çулта, печенегсене аркатса тăкнă хыççăн, Ярослав Владимирович хăй çĕнтернĕ çĕрте—Киев хулинче — Софи соборне тума пуçланă. Унта вăл пурте усă курмалли кĕнекесем нумай пухнă. Вăл чĕннĕ тăлмачсемпе переписчиксем кĕнекесене ют чĕлхесенчен, пуринчен малтан грек чĕлхинчен, вырăсла куçарнă тата вырăсла куçарнă алçырăвĕсемпе славян, морава, чех чĕлхисемпе çырнă алçырăвĕсене çыра-çыра илнĕ.

Софи соборĕ вăл пергамент çине çырнă хаклă алçырăвĕсене сыхласа усракан вырăн çеç пулман (çав алçырăвĕсен тĕслĕхĕсем хальхи вăхăтчен Остромиров евенгелийĕнче сыхланса юлнă), вăл тата кĕнекесем тăвакан центр та пулнă. Унта кĕнекесене сăрласа илемлетнĕ, хытă хуплашкаллă тунă, унтан çав кĕнекесем вара пĕтĕм государство тăрăх саланнă.

Вырăссен пĕрремĕш библиотеки авал çырулăхпа кĕнекесем сарас ĕçре пысăк вырăн йышăнса тăнă.

Ярослав Мудрый çав собора хăçан туса пĕтернине летопиçсемпе ытти çырусенче кăтартман пулнă, çавăнпа та çав библиотекăна хăçан тунине пĕлме май пулман. Куфаев профессор çав собора сичĕ çул çурă тунине пĕлнĕ. Çапла вара вырăссен пĕрремĕш библиотеки 1045 çулта, урăхла каласан, 900 çул ĕлĕкрех ĕçлеме пуçлани паллă пулса тăнă. (ТАСС).

### ВЛАДИМИР ХУЛИ НОВГОРОДА ШЕФА ИЛНĔ

Отечественнăй аслă вăрçă пĕтнĕ хыççăн Владимир çыннисем Новгород хулине шефа илнĕ. Владимир облаçĕнчи заводсемпе фабрикăсем Новгородри предприятисем валли планран ирттерсе станоксем, инструментсем, электропроводсем, строительство материалĕсем тăваççĕ. Новгорода металл касакан 30 станок ытла тата насуссем, сунталсем, тимĕрçĕ яралисем, электричествăпа, газпа хĕртсе çыпăçтармалли аппаратсем, слесарь инструменчĕсемпе станок инструменчĕсем, чÿрече кĕленчисем нумай янă.

Новгород çыннисем Владимир çыннисене çыру янă, унта вĕсем хăйсене пулăшнăшăн тав тăваççĕ. Владимировецсем пулăшнипе пула вĕсем театр çуртне юсаса çитернĕ тата колхозниксемпе хула çыннисене нумайĕшне çĕр пÿртсенчен лайăх çуртсене куçарнă.

Хальхи вăхăтра Владимир ĕçсыннийĕсем Новгорода яма çĕнĕ эшелон кучченеçсем хатĕрлеççĕ. Стекольщиксем килте кирлĕ савăт-сапа икĕ вагон яраççĕ, металлистсем—колхозниксен халь тăвакан 4.000 çурчĕ валли кирлĕ хатĕрсем яраççĕ. (ТАСС).

### РЕСПУБЛИКĂРА ГОСУДАРСТВĂНА ТЫРĂ ПАРАС ĔÇ ДЕКАБРĔН 10-мĕшĕ ТĔЛНЕ МĔНЛЕ ПЫНИНЕ КĂТАРТАКАН СВОДКА

(процентпа)

| РАЙОНСЕМ | Тырă панă |
|---|---|
| 1. Чурачăк | 111.5 |
| 2. Красноармейски | 111.4 |
| 3. Етĕрне | 110.8 |
| 4. Вăрнар | 110.0 |
| 5. Советски | 109.1 |
| 6. Муркаш | 109.0 |
| 7. Сĕнтĕр | 108.6 |
| 8. Шупашкар | 107.9 |
| 9. Элĕк | 107.4 |
| 10. Ишлей | 105.4 |
| 11. Калинино | 105.3 |
| 12. Октябрьски | 105.1 |
| 13. Шăхасан | 104.9 |
| 14. Сĕнтĕрвăрри | 104.2 |
| 15. Çĕрпÿ | 103.9 |
| 16. Пăрачкав | 100.4 |
| 17. Елчĕк | 98.6 |
| 18. Вăрмар | 97.9 |
| 19. Канаш | 93.9 |
| 20. Куславкка | 92.1 |
| 21. Хĕрлĕ Чутай | 91.3 |
| 22. Йĕпреç | 90.4 |
| 23. Комсомольски | 86.1 |
| 24. Первомайски | 84.7 |
| 25. Çĕмĕрле | 84.4 |
| 26. Улатăр | 82.3 |
| 27. Тăвай | 77.0 |
| 28. Чкаловски | 76.4 |
| 29. Шăмăршă | 61.7 |
| 30. Кувакино | 54.5 |

### МТС-ăн çулталăк хушшинчи ĕçĕсем

Вăрçăччен тата вăрçăн малтанхи çулĕсенче Çĕрпÿ МТС-ĕ республикăри кайра пыракан МТС-сен шутĕнче пулнă. Вăл хăйĕн ĕç планне çулран-çулах тултараймасăр пынă. Директор пулса ĕçлеме М. Г. Арзамасов юлташа лартнă хыççăн, МТС çитĕнÿсем тума пуçларĕ.

Кăçал МТС хăйĕн çулталăкри ĕç планне сентябрĕн 25-мĕшĕ тĕлне тултарчĕ, 11.100 гектар сухалас вырăнне, 13.771 гектар сухаланă. Тимофей Степанов коммунист ертсе пыракан 10-мĕш трактор бригади хăйĕн ĕç тухăçлăхĕпе пахалăхне çулленех ÿстерсе пырать. Кăçал вăл хăйĕн çулталăк планне 213 процент тултарнă, 1.707 килограмм горючи перекетленĕ. Лайăх ĕçленĕшĕн Степанов юлташ Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотине илме тивĕçлĕ пулчĕ.

Бригадăра нормăна ирттерсе тултарман пĕр тракторист та çук. Акă Митрофан Степанов тракторист кăçалхи сезонра 164 гектар сухалас вырăнне 460 гектар сухаланă, 533 килограмм горючи перекетленĕ. Анна Данилова 402 гектар сухаланă, 476 килограмм горючи перекетленĕ.

Комсомолецсемпе çамрăксен бригадисенчен кăçал уйрăмăнах Дмитрий Ивановпа Таисия Андреева ертсе пыракан бригадăсем лайăх ĕçлерĕç. Комсомолецсемпе çамрăксем кĕрхи çĕртме тунă çĕрте те лайăх тĕслĕхсем кăтартса ĕçлерĕç. Кĕрхи çĕртме планне ирттерсе тултарнăшăн МТС-ри комсомол организацин секретарьне Т. Иванова юлташа ВЛКСМ Обкомĕпе Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ 250 тенкĕ парса премилерĕ.

Çавнашкалах Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотине илнĕ Иван Беспалов, Василий Баранов, Александр Захаров тата Степан Евдокимов бригадисем те лайăх ĕçлерĕç.

Хĕрачасем те арçын трактористсенчен юлмаççĕ. Акă, ВЛКСМ Центральный Комитечĕн Хисеплĕ грамотине илнĕ Ольга Кириллова хăйĕн ĕç планне 224 процент тултарчĕ. Çавăн пекех Марфа Гаврилова, Анастасия Тимофеева, Ксения Андреева трактористкăсем те хăйсен нормисене 200 процентран ирттерсе тултарчĕç, кашниех 300—500 килограмм горючи перекетлесе хăварчĕç.

Машинăсемпе тракторсен ĕçĕн ăнăçлăхĕ вĕсене вăхăтра тата тĕплĕн юсаса тăнинчен килет. Çакна МТС-ри кашни трактористпа механик тĕрĕс ăнланса илнĕ. МТС-ăн старши механикĕ Коночкин юлташ, СССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕнчен темиçе хут та преми илнĕскер, тракторсемпе машинăсене вăхăтра юсассине йĕркеленĕ. Вăл ертсе пынипе иртнĕ çул куçса çÿрекен ремонт мастерскойĕ ĕçлерĕ. Халĕ машинăсемпе тракторсен паркне юсас ĕç хĕруллĕн пырать. МТС октябрьпе ноябрьте машинăсем юсамалли плана тултарчĕ. Паянхи куна 7 трактор, 2 тырă акмалли машина, 2 культиватор юсанă. Машинăсене епле юсанине МТС директорĕ Арзамасов юлташ хăй тĕрĕслесе тăрать, палăрнă çитменлĕхсене сиенĕнчех тÿрлеттерет.

П. ПАВЛОВ.

### «РЕСПУБЛИКА ÇУЛĔ»

Çитес çывăх кунсенчех Чăвашгосиздатра Арк. Эсхелĕн «Республика çулĕ» ятлă поэми вырăсла пичетленсе тухать. Автор ăна Чăваш республики 25 çул тултарнă май аслă Сталина халаласа çырнă. Вырăсла ăна Вл. Алатырцев куçарнă.

## КОМСОМОЛ ПУРНĂÇĔ

### КОМСОМОЛ ХУÇАЛĂХНЕ ЙĔРКЕЛЛĔ ТЫТМАЛЛА

Комсомол хуçалăхĕнче большевикла йĕркелĕх тăвасси пысăк та ответлă ĕç. Комсомол хуçалăхне лайăх та йĕркеллĕ тытнинчен комсомол организацийĕн ĕçĕ те нумай килет.

Юлашки вăхăтра Хĕрлĕ Чутай районĕнче комсомол пуçламĕш организацийĕсенче комсомол хуçалăхне йĕркелесе çирĕплетес тĕлĕшпе чылай ĕçсем туна. Нумай комсомол организацийĕсем комсомол докуменчĕсене уйрăм ешĕксенче е шкафсенче тирпейлĕн сыхласа усраççĕ, пухусен протоколĕсене йĕркеллĕ çырса ВЛКСМ райкомне вăхăтра тăрататççĕ, член укçисене вăхăтра пухаççĕ, комсомола кĕрекенсен анкетисене тĕрĕс çыраççĕ.

Анчах та хăшпĕр комсомол пуçламĕш организацийĕсенче комсомол хуçалăхне çителĕклĕ йĕркелмен-ха. Уйпуçĕнчи, Киватикассинчи, Сĕнтĕк çырминчи комсомол пуçламĕш организацийĕсенче комсомол хуçалăхне лайăх сыхласа усрассишĕн тăрăшмаççĕ. Ку организацисенче комсомол докуменчĕсене усрама ешĕксем çук. Комитет секретарĕсем А. Лаптев, А. Борисов, С. Варламов юлташсем ĕç хучĕсене хăйсен килĕнче усраççĕ.

Комсомол хуçалăхне йĕркелес ĕçри тепĕр çитменлĕх вăл комсомол докуменчĕсене тирпейлĕ çырманни пулать. Ку ыйтупа ВЛКСМ райкомĕ комсомол организацийĕсен секретарĕсемпе пĕр кунлăх семинар ирттернĕ. Çапах та хăшпĕр секретарьсем ку ĕç çине сиелтен пăхаççĕ. Пухусен протоколĕсене йĕркеллĕ çырмаççĕ. Чылай организацисенче протокол çине «Итленĕ», «Йышăннă» тесе пĕр-ик сăмахпа çеç çыраççĕ. Пухусенче комсомолецсем мĕн çинчен тухса калаçнине, мĕнле ыйтусем панине тата мĕнле решенисем йышăннине тĕплĕн çырма тăрăшмаççĕ. Акă, «Мотор» колхозри комсомолецсем пухура суйлава мĕнле хатĕрленесси çинчен сӳтсе-явнă. Анчах та протоколра ку ыйтупа мĕн тума йышăннине нимĕн те çырса хăварман. ВЛКСМ райкомĕ ку пуçламĕш организацине пулăшас майпа унта комсомол райкомĕн инструкторне янă. Çакăн хыççăн пуху çĕнĕрен решени йышăннă. Агитмассăллă ĕçе лайăхлатас майпа агитаторсен семинарĕсене эрнере пĕрре ирттерме, вулав сурчĕнче выставка тума, справка сĕтелĕ уçма, стена хаçачĕпе боевой листоксене йĕркеллĕ кăларса тăма йышăннă. Агитаторсене килсем çумне çирĕплетнине, кружока кам ертсе пырассине т. ыт. те уççăн кăтартса панă. Кун хыççăн суйлава хатĕрленес ĕç те лайăхланнă.

Комсомол хуçалăхĕнче информаци ĕçне лайăх йĕркелени кирлĕ. Вăл пуçламĕш организацисене куллен ертсе пырассине лайăхлатать, ĕçри çитменлĕхсене хăвăрт пĕтерме пулăшать. Анчах ку ĕç комсомол организацийĕсенче начар пулса пырать-ха. Акă, Хирлукассинчи, Мăн Хăмарккари комсомол пуçламĕш организацийĕсен секретарĕсем П. Ягункина И. Чабыков юлташсем виçĕ уйăх ытла ĕнтĕ ВЛКСМ райкомне член укçи пухни çинчен нимĕнле информаци те тăратман. Хăшпĕр секретарьсем член укçине вăхăтра пухмаççĕ, е пухсан та перекет кассине вăхăтра хывмаççĕ. Кӳнешри комсомол организаци секретарĕ Н. Медведев юлташ юлашки вăхăтра 3 уйăх хушши член укçи пухман. Киватикассинчи комсомол пуçламĕш организацийĕн секретарĕ А. Борисов 76 тенкĕ член укçине темиçе уйăх хушши хăйĕн кăсъинче чиксе çӳренĕ.

Комсомол хуçалăхне лайăхлатас ĕçре ВЛКСМ райкомĕн бюровĕнче час-часах ыйту лартса сӳтсе-явнă. Уйрăм пуçламĕш организацисен секретарĕсен отчечĕсене итлесе тивĕçлĕ решенисем йышăннă. Çапла, больницăри, «Красный Остров» колхозри пуçламĕш организацисенче комсомол хуçалăхĕ йĕркесĕр пулнă пулсан, бюро заседанийĕнче секретарьсен отчечĕсене итленĕ хыççăн ĕç тĕп'ренех улшăннă.

Комсомол хуçалăхне йĕркелес тата çирĕплетес тĕлĕшпе куллен ĕçлемелле. Халĕ пирĕн умра суйлава лайăх хатĕрленес задача тăрать. Комсомол хуçалăхне йĕркелени комсомол пуçламĕш организацийĕсене суйлава хатĕрленес ĕçре те пысăк ăнăçлăхсем тума пулăшĕ.

**П. ТИХОНОВ.**

### ХУДОЖЕСТВĂЛЛĂ ПУЛТАРУЛĂХ КРУЖОКĔ

СОВЕТСКОЕ. Шăматри «Ыраш» колхозри комсомолецсемпе çамрăксен художествăллă пултарулăх кружокĕ аван ĕçлет. Кружокра пурĕ 15 çын. Вĕсем колхоз ĕçне хастарлăн хутшăнса ĕçленĕ вăхăтрах кружок ĕçĕсене те аван туса пыраççĕ.

Халĕ СССР Верховный Советне суйлама хатĕрленсе кружок членĕсем çĕнĕ постановкăсем хатĕрлесе спектакльсем лартаççĕ, художествăллă пултарулăх вечерĕсене ирттереççĕ. Постановкăсем е вечерсем пуçланас умĕн ялалах калаçусем е докладсем пулаççĕ.

Кружок членĕсем çывăхри колхозсене те кайса спектакльсем лартса параççĕ, художествăллă пултарулăх вечерĕсем ирттереççĕ.

**Яков СИГАЙ.**

—⊙—

### *Иван Мучин суйласа илнĕ калавĕсем*

Иван Мучи çыравнăранпа 50 çул тата литературăра ĕçлеме пуçланăранпа 25 çул тултарнă тĕле Чăваш ен государство издательстви писателен суйласа илнĕ калавĕсен сборникне пичете панă.

## Нимĕçсен вăрçă пуçланăшăн айăплă тĕп преступникĕсене Нюрнберг хуликче суд туни

### ДЕКАБРĔН 10-мĕшĕнчи ИРХИ ЛАРУ

НЮРНБЕРГ, декабрĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Трибуналăн декабрĕн 10-мĕшĕнчи ирхи ларăва уçнă чухне трибунал председателĕ Лоуренс лорд çапла пĕлтерне: хӳтĕлекенсене суд следствийĕ пĕтнĕ хыççăн çеç хӳтĕлемелли пĕр сăмах паратпăр, тенĕ. Унтан Америка айăплаканĕ Олдермен сăмах тухса каланă. Хăйĕн сăмахне вăл документсемпе çирĕплетсе панă. Хăйĕн сăмахĕнче Олдермен гитлеровецсем ССР Союзне хирĕç каварланнине тăрă шыв çине кăларнă. Олдермен «21-мĕш номер директива» текен документăн пĕр выржине вуласа парать. Çакă ĕнтĕ «Барбаросс планĕ» пулать, ăна Гитлер приказ евĕрлĕ туса çырнă. Çак документа Гитлер 1940 çулхи декабрĕн 18-мĕшĕнче алă пуснă. Олдермен документăн «Германин хĕçпăшаллă вăйĕсен Англие хирĕç пыракан вăрçă пĕтиччен Совет Российне хăвăрт [illegible] арканире аркатса тăкма хатĕрленмелле» текен параграфа вуласа парать.

Уйрăм йышши çарсене кăтарту панисене вуласа памасăрах, Олдермен малалла «Нумай вăхăт хушши хатĕрленмелли ĕçсене, вĕсене ку таранччен туман пулсан, халех тума тытăнмалла та 1941 çулхи майăн 15-мĕшĕччен туса пĕтермелле. Тапăнмалли плана ан пӳлчĕр тесе, питĕ асăрханса хатĕрленмелле» текен выржана вуласа парать. Айăплакан çак документа вуласа, парассине Гитлер приказĕн юлашки параграфне вуласа панипе пĕтерет: «Эпĕ çак инструкци тăрăх тунă главнокомандующисен малашнехи планĕсем çинчен докладсем туса парасса кĕтетĕп. Пур йышши хĕçпăшаллă вăйсем хатĕрленни çинчен те мана верховнăй командовани урлă пĕлтерсе тăмалла».

Çав документран акă мĕн курăнса тăрать,—тет Олдермен:—çак ĕнтĕ ахаль план çеç мар, вăл агрессиллĕ вăрçă пуçласа ямалли приказ пулать. Çав приказ тăрăх ĕнтĕ тĕрлĕ йышши çарсем Совет Союзне тапăнма хатĕрленнĕ. Кунта кĕтмен çĕртен тапăнассине тĕп выржана хунă. Çакна çирĕплетес майпа айăплакан тинĕс штабĕн оперативнăй дневникне кăтартса парать. 1941 çулхи январĕн 30-мĕшĕнче унта çапла çырса хунă: оперативнăй отдел штабĕн начальникĕ туса ирттернĕ канашлура «вырăс флотне кĕтмен çĕртен пырса çапса аркатса тăкмалли» мелсене туса хатĕрленĕ.

Тинĕс штабĕн оперативнăй дневникне малалла вуласа панă май, айăплакан çапла калать: Германин тинĕс-çар флотĕ тапăнмалли кун çитиччен чылай малтан ССР Союзне тапăнма хатĕр пулнă. Çавăн пекех ытти йышши çарсем те хатĕр тăнă. «ССР Союзне тапăнни ĕнтĕ,—тесе калать айăплакан,—мĕнпур вăрçăсен историйĕнче чи тĕплĕн шухăшласа хурса вăрттăн тапăнни пулса тăрать».

Гитлеровецсем тĕплĕн хатĕрленнине кăтартса панă май, Олдермен 1941 çулхи февралĕн 3-мĕшĕнче «Барбаросс планĕ» тĕлĕшпе Гитлер патĕнче пулса иртнĕ конференцин отчетне илсе кăтартать. Çав конференцире Гитлерсăр пуçне Кейтель, Иодль, çарăн главнокомандующийĕ, çарăн генеральнăй штаб начальникĕ, оперативнăй отдел начальникĕ, Шмундт полковник тата тепĕр икĕ офицер пулнă. Канашлура çарăн генеральнăй штаб начальникĕн докладне итленĕ, тĕрлĕрен çар планĕсене пурнăça кĕртес тĕлĕшпе мĕн-мĕн тумаллине палăртса хунă. Çак документран акă мĕн курăнса тăрать: «Барбаросс планĕсĕр» (ССР Союзне тапăнисĕр) пуçне, гитлеровецсен тата çакăн пек плансем пулнă: «Аттила планĕ» (Францин оккупациленмен пайне тытса илмелли план), «Феликс планĕ» (Гибралтара тытса илмелли план), «Тинĕс арăсланĕн планĕ» (Англие хирĕç вăрçмалли план) тата «Марица планĕ» (Грецие хирĕç вăрçмалли план). «Марица планĕ» çинчен калаçнă вăхăтра Гитлер çапла каланă: «Барбаросс планне» пурнăça кĕртме тытăнсан, пĕтĕм тĕнче сывлама чарăнĕ, ушăн пире никам та пĕр сăмах та каламĕ». Ыйтусене сӳтсе-явнă хыççăн канашлу хăшпĕр выводсем тунă, вĕсене отчетра çапла кăтартса панă:

«Пĕррехмĕшĕ—«Барбаросс планĕ».

а) Пĕтĕмĕшпе илсен, фюрер оперативнăй планпа килĕшет. Плана пурнăça кĕртнĕ чухне тĕп тĕллев Балтика тăрăхĕнчи государствăсене тата Ленинграда тытса илесси пулнине асра тытмалла.

в) Фюрер оперативнăй картăна тата çарсене вырнаçтарса тăратнин планне хăй патне май килнĕ таран хăвăртрах ярса пама хушать.

с) Операцисене маланнне вăрттăнлатма кирлĕ вăхăт иртсен тин кӳршĕри государствăсемпе килĕшӳсем тума юрать. Ку шута пĕр Румыни çеç кĕмест.

д) Кирек епле пулсан та «Аттила планне» пурнăça кĕртмелле (ку ĕнтĕ пулăшакан мера пулса тăрать).

е) «Барбаросс планне» пурнăça кĕртме стратегиллĕ вăйсем пухнине «Тинĕс арăсланĕн планне» тата «Марица планне» пурнăça кĕртме хатĕрленнĕ пек туса вăрттăнлатмалла».

Малалла Олдермен çĕнĕ документ вуласа парать. Ăна 1941 çулхи мартăн 13-мĕшĕнче айăпланакан Кейтель алă пуснă. Ку документра пуринчен ытларах СС пĕлтерĕшĕ çинчен каланă. «СС рейхсфюрерĕ,—тенĕ документра,—фюрертан политикăллă администраци ĕçĕсене туса пыма хатĕрленме полномочи илнĕ. Хăйне тивекен задачăсене пурнăça кĕртнĕ чухне СС рейхсфюрерĕ никама пăхăнмасăр ĕçлесе хăйĕн ĕçĕшĕн хăй ответ тытать. Çарăн главнокомандующийĕне унăн органĕсене панă исполнительнăй влаçа çак приказ тивмест. Çак задачăсене пурнăça кĕртнĕ чухне СС рейхсфюрерĕн çар операцийĕсене кансĕрлемелле мар. Ĕçĕн уйрăм пайĕсене çарăн верховнăй командованийĕпе СС рейхсфюрерĕ пĕр-пĕринпе хăйсем килĕштерсе татса параççĕ.

Оперативлă анлăш чылай шала кĕрсе кайсан, вăл вара тыл пулса тăмалла. Çĕнĕрен оккупациленĕ оперативлă анлăшĕн тылĕнчи территорире политикăллă администраци туса хумалла. Çав территори çурçере (Балтика тăрăхĕнчи çĕршывсем), центра (Белоруссн) тата кăнтăра (Украина) пайланса тăрать. Çак территорири политикăллă администрацие импери комиссарĕсем пуçпулса тытса тăраççĕ, вĕсем фюрертан приказ илеççĕ.

Политикăллă администраци аллинчи территорири вăрçă задачисене пурнăça кĕртессине главноначальствующи офицерсен аллине параççĕ, вĕсем вара хĕçпăшаллă вăйсен верховнăй командующийĕ умĕнче ответ тытаççĕ. Главноначальствующи офицер тивĕçлĕ территорире хĕçпăшаллă вăйсен чи аслă представителĕ пулса тăрать, вăл çарăн сувереннăй прависене пурнăça кĕртсе пырать. Унăн территорири командирăн задачисене пурнăça кĕртсе пымалла тата унăн çарти аслă командирăн е командующи генералăн прави пур. Çак ĕçсене пурнăça кĕртнĕ чухне чи малтанах вăл çаксемшĕн ответ тытать:

1) Импери комиссарĕпе таччăн çыхăнса ĕçлесе ăна хăйĕн задачисене пурнăça кĕртме пулăшать.

2) Çав территори экономика пуянлăхĕсене Германи промышленноçĕнче усă курма турттарса тухма пулăшать».

Çав документра Геринга «операцисен районĕсенчи тата политикăллă администраци аллинчи территорисенчи экономикăна организацилеме» чрезвычайнăй полномочи пани çинчен каланă.

Малалла айăплакан çав документăн уйрăм сыпăкĕсене илсе кăтартать. Вĕсенче транспорт, снабжени, личнăй состав çинчен каланă. Унтах Румынипе, Словакипе, Венгрипе, Финляндипе тата Швецие килĕшӳсем тăвас тĕлĕшпе верховнăй командование кăтартусем панă.

Айăплакан суда тинĕс штабĕн дневникне парать. Çав дневник тăрăх, тет вăл, Германин Совет Союзне пĕр уйăх маларах тапăнмалла пулнă. Унăн сăмахĕ тăрăх, Совет Союзне тапăнасси Югославири ĕçсем кансĕрленĕ, мĕншĕн тесен çакăн хыççăн Германи Югославие тапăннă. 1941 çулхи апрелĕн 3-мĕшĕнче çав дневникра çапла çырса хунă: «Балканри операцисем «Барбаросс планне» пурнăça кĕртессине 5 эрнелĕхе каярах хăварчĕç. Фюрер приказĕ тăрăх, наступлени тума хатĕрленнине пĕлтерекен пур ĕçсене те халех чарса лартмалла».

Совет Союзне тапăничен икĕ эрне маларах—1941 çулхи июнĕн 6-мĕшĕнче—Гитлер операцисем хăçан пуçланмалли расписание çирĕплетнĕ. Кунта вăл вăрçă хăш кун пуçланмаллине çеç мар, миçе сехетре пуçланмаллине те кăтартса панă. Кашни йышши çара конкретнăй задачăсем панă. Айăплакан çак расписание тĕплĕн вуласа парать. Ăна хĕçпăшаллă вăйсен пур йышши командованине те ярса панă пулнă. Трибунал председателĕ: çак документа тĕплĕн вуласа пама кирлĕ-и? тесе ыйтнине хирĕç, Олдермен «кирлĕ» тесе ответ парать, мĕншĕн тесен, тет вăл, çав документ гитлерла каварлашуçăсем Совет Союзне тапăнма малтанах мĕн тери тĕплĕн хатĕрленнине кăтартса парать.

1941 çулхи июнĕн 9-мĕшĕнче Берхтесгаденра Гитлер патĕнче «Барбаросс планĕ» тĕлĕшпе конференци пулнă. Çак конференцире ССР Союзне тапăнмалли плана йышăнса татăклăн çирĕплетнĕ. Унта Гитлерсăр пуçне Геринг, Редер, Кейтель, Иодль тата ыттисем те пулнă. Çав канашлун отчетне вуласа панă май, айăплакан татах тепĕр хут çирĕплетсе çакна палăртать: пĕррехмĕшĕ—фашистла каварлашун вăрă-хурахлăхне, иккĕмĕшĕ—çак ирсĕр кавара нимĕçсен çар представителĕсем хутшăннине. Кунта айăпланакан: Герингпа Кейтель, Иодльпе Редер активлă каварлашуçăсем çеç пулман, вĕсем çав кавара пуçласа яракансем те пулнă, тет. Вĕсем çав каварăн уйрăм пайĕсене туса хатĕрленĕ. Вĕсем нимĕçсен хĕçпăшаллă вăйĕсене ССР Союзне тапăнма тата Совет Союзĕнчи халăхсене хирĕç агрессиллĕ вăрçă пуçласа яма хатĕрленĕ.

«Нацистла каварлашуçăсем,—тет Олдермен,—хăйсен çар машинине тытса пыма чĕртаварпа апат-çимĕç тупса парас тесе ССР Союзне тытса илме сăхăн хапсăннă».

Айăплакан Томас генералăн сăмахне илсе кăтартать. Томас генерал ун чухне Германин хĕçпăшаллă вăйĕсене экономика тĕлĕшĕнчен снабжени парассипе ĕçленĕ. Вăл çапла каланă: 1940 çулхи ноябрь уйăхĕнче Геринг мана ССР Союзĕн чĕртавар пуянлăхĕсемпе промышленность ресурсĕсене эксплоатацилеме хатĕрленме хушрĕ. Çакна пурнăça кĕртме хатĕрленнĕ май, Томас генералăн штабĕн çаксем çинчен пысăк материал пухмалла пулнă:

1) вырăссен çар промышленноçĕ çинчен, 2) пысăк заводсен тухăçлăхĕ çинчен, 3) чĕртавар çăлкуçĕсем çинчен, 4) çар промышленноçĕ мар предприятисем çинчен тата 5) электростанцисен хавачĕсемпе топливо запасĕсем çинчен. Тĕпчевçĕсемпе статистиксем нумай уйăх хушши ĕçленĕ хыççăн Томас генералăн штабĕ питĕ пуян материал пухнă.

1941 çулхи мартăн 1-мĕшĕнче Томас генерал патĕнче канашлу пухăннă. Олдермен çав канашлун меморандумне трибунала парать. Меморандумра чи малтанах Совет Союзĕнчи пуянлăхсене эксплоатацилес ĕçе Геринг ертсе пырать, тесе каланă. Вăл çак ĕçе тума хăйне уйрăм организаци тума распоряжени панă та ĕнтĕ. Çав организацин Германие кирлĕ чĕртаварсăр пуçне, тăватă çуллăх плана пурнăça кĕртме промышленность оборудованийĕ те парса тăмалла пулнă. «Организацин тĕп задачи, тенĕ документра, чĕртавар тата мĕнпур промышленность концернĕсене тытса илесси пулать. Çак юлашки задачăна пурнăça кĕртнĕ чухне Германири промышленность концернĕсенчен шанчăклă çынсем илсе тăмалла». Меморандумра совет территорине мĕнле çаратмалли çинчен тĕплĕн каласа панă, унтах тата çар командованийĕпе тата ытти организацисемпе çыхăну тытас тĕлĕшпе мĕн-мĕн тумаллине кăтартса панă.

Гитлерла çынвĕлеренсемпе пусмăрçăсен çарĕ хыççăн квалификациллĕ çаратуçăсен çарĕ пымалла пулнă. Кашни çĕнĕ документ, тесе асăрхаттарать айăплакан, гитлерла каварлашуçăсен ирсĕр ĕçĕсене çĕнĕрен те çĕнĕ тăрă шыв çине кăларать. Вĕсем хăйсем тапăннă çĕршыва пĕтĕмĕшпех çаратма, çав çĕршыври халăхран апат-çимĕç запасне, заводсене, чĕртавара тата ĕç вăйне те туртса илме тăрăшнă. Çакăн пек туни çĕршыва юхăнтарасси патне çеç мар, тата халăха выçăпа вĕлересси патне те илсе пынине малтанах пĕлнĕ. Анчах та гитлерла каварлашуçăсене шăпах çакă кирлĕ пулнă. Олдермен çĕнĕ документ вуласа парать. Вăл—1941 çулхи апрелĕн 21-мĕшĕнче пулнă хĕçпăшаллă вăйсен представителĕсен конференцийĕн отчечĕ. Конференцин тĕллевĕ—«Барбаросс планĕн» экономикăллă енне организациллĕ структурăна кĕртесси» пулнă. Документăн малтанхи пайне «Барбаросса—Ольденбург» тесе ят панă. Документра çав пур организацисен задачисене те каласа тухнă, çавăн пекех тата мĕнпур совет территорине уйрăм инспекторсене валеçсе панă.

Политикăллă тĕллевсем çинчен айăплакан çапла калать: гитлерла каварлашуçăсем Совет Союзне пĕтерсе тăкма ĕмĕтленнĕ. Çакă ĕнтĕ вĕсене Европăри халăхсене чуралантарма пулăшмалла пулнă. Розенберг 1941 çулхи апрелĕн 2-мĕшĕнче çырнă пысăк меморандумра çапла каланă: Совет Союзĕн пуянлăхĕсене лайăхрах эксплоатацилес тата унăн халăхĕсене чуралантарас тесе, Совет Союзĕн территорине темиçе уйрăм государствăна валеçмелле. Çак план,—тесе çырнă Розенберг,—çаксенчен тухса тăрать:

«Пĕррехмĕшĕ—ССР Союзĕн мĕнпур оккупациленĕ территорийĕнче центрти департамент тумалла. Çав департаментăн империри органсемпе килĕштерсе ĕçлесе çаксене тумалла: а) администраци тĕлĕшĕнчен пĕр-пĕринпе çыхăнса тăман районсем валли обязательнăй инструкцисем кăлармалла; б) оккупациленĕ пур районсенчен те импери валли снабжени кӳрсе тăмалла; с) пур районсене валли те финанс, фондсем, транспорт, нефть, кăмрăк тата апат-çимĕç тĕлĕшпе тивĕçлĕ мероприятисем тумалла.

Иккĕмĕшĕ—расса тĕлĕшĕнчи паллăлăхсем тăрăх е экономикăри паллăлăхсем тăрăх уйрăм облаçсене вакламалла. Çакăнпа пĕрлех вĕсен кашнин умне экономика тĕлĕшĕнчи хăйне уйрăм задачăсем кăларса тăратмалла».

1941 çулхи апрелĕн 20-мĕшĕнче Розенберга хĕвелтухăçĕнчи территорисем тĕлĕшпе ĕçлекен главнăй уполномоченнăй туса хунă. Çак ĕçе йышăнсанах Розенберг айăпланакан Кейтельпе, Функпа тата ыттисемпе те канашлусем туса ирттернĕ. 1941 çулхи майăн 8-мĕшĕнче айăпланакан Розенберг оккупациленĕ хĕвелтухăçĕнчи территорисенче импери комиссарĕсем пулса ĕçлеме палăртнă кандидатсем патне инструкци ярса панă.

Çавăн пек документсенчен пĕринче Розенберг Эстоние, Литвапа Латвие нимĕçсене куçарса пырса нимĕçлентерме сĕнет. Унта çапла каланă:

«Латвире пире вăйлăн хирĕç тăма пултараççĕ, çавăнпа та пирĕн унти халăха илсе тухма палăртмалла. Литвара та ĕç çавăн пекех пулма пултарать. Çав çĕршывсене нимĕçлентерес тесе унта нимĕçсене ытларах илсе пымалла». Балтика тăрăхĕнчи çĕршывсенчен илсе тухнă çынсене Белоруссии республикине вырнаçтармалла пулнă. Познаньпе Лодзь районĕсенчен илсе тухнă поляксене те Розенберг çавăнтах вырнаçтарма сĕннĕ. Импери комиссарне Розенберг пур майсемпе те усă курма ирĕк панă.

«Колони проблемине татса парасси вăл,—тесе çырнă Розенберг,—Балтика тăрăхĕнчи çĕршывсен ĕçĕ мар, вăл пĕр Аслă Германи ĕçĕ çеç, çавăнпа та ăна Германин хăйĕн татса памалла».

Çак документсем ĕнтĕ, тесе асăрхаттарать айăплакан, гитлерла каварлашуçăсен Совет Союзне тытса илмелли планĕсене тăрă шыв çине кăлараççĕ.

Олдермен ССР Союзне тапăнма хатĕрленес тĕлĕшпе Розенберг хăй мĕн туни çинчен калакан отчета парать. «Кунта çапла шутлама пулать,—тесе асăрхаттарать Олдермен:—Розенберг çав отчета хăйне айăплаканĕсене пулăшас тенĕ пекех питĕ тĕплĕн çырнă. Çак документри чи интереслă вырăн вăл çакă пулать: вăл Розенбергпа пĕрле ĕçлесе ăна агресси тума пулăшнă çынсен ирсĕр ĕçĕсене тăрă шыв çине кăларать. Çавăн пекех вăл тата нимĕçсен империалистла предприятине государствăн пур министерствисемпе учрежденийĕсем те, çавăн пекех тата пур партисем те хутшăннине кăтартса парать».

Документа «Хĕвелтухăç Европăри территорисем тĕлĕшпе хатĕрленни çинчен калакан отчет» тесе ят панă. «Интеллигенцие, комиссарсене тата вырăссен ытти руководителĕсене вĕлерсе пĕтересси, тет Олдермен, оперативлă программăн пĕр пайĕ çеç пулнă. Çав программа тăрăх гитлеровецсем Совет Союзне политика тĕлĕшĕнчен аркатса тăкса ăна Европăри державăсен шутĕнчен кăларса пăрахма шутланă.

Çапла ĕнтĕ, Совет Союзне тапăнма гитлеровецсем пур енчен те тĕплĕн хатĕрленсе 1941 çулхи июнĕн 22-мĕшĕнче хăйсен планне пурнăça кĕртме тытăнчă. Çав кун Гитлер прокламаци кăларнă. Олдермен çав прокламацин пĕр пуплевне çеç илсе кăтартать: «Эпĕ паян Германи кунçулне каллех хамăрăн салтаксен аллине пама йышăнтăм». Çакăн пек калани ĕнтĕ,—тет Олдермен,—вăрттăн туса хатĕрленĕ плана пурнăça кĕртме тытăннине пĕтĕм тĕнчене пĕлтерни пулса тăрать. Гитлерла каварлашуçăсем, агрессиллĕ вăрçă пуçласа яма вăрттăн та тĕплĕн хатĕрленсе, ăна пуçласа ячĕç. Гитлерла каварлашуçăсен Совет Союзне тытса илмелли тĕп задачисенчен пĕри вăл—Совет Союзĕнчен гитлерла çар машинине кирлĕ апат-çимĕçпе чĕртавар запасĕсене тытса илесси пулнă. Çакăн пек çаратни халăхшăн мĕн тери пысăк инкек пулса тăнине гитлеровецсем нимĕн чухлĕ те шута илмен. Олдермен пĕр меморандумăн икĕ параграфне вуласа парать. Ăна 1941 çулхи майăн 2-мĕшĕнче çырса «государство секретарĕсемпе «Барбаросс планне» сӳтсе-явнин результачĕ» тесе ят панă. Çав икĕ параграфра çапла каланă:

«Пĕррехмĕшĕ. Вăрçăн виççĕмĕш çулĕнче мĕнпур хĕçпăшаллă вăйсем Российăран илсе килнĕ апат-çимĕçе илсе тăрсан тин эпир малалла вăрçма пултаратпăр.

Иккĕмĕшĕ. Çĕршывран эпир хамăра мĕн кирлине илнине пула нумай миллионла халăх выçăпа вилесси çинчен нимĕн иккеленмелли те çук».

Трибуналăн декабрĕн 10-мĕшĕнчи ирхи ларăвĕ çакăнпа хупăнать.

≈≈≈≈

### НЮРНБЕРГ ХУЛИНЧЕ СОВЕТ ÇАР ÇЫННИНЕ ВĔЛЕРНĔ

НЮРНБЕРГ, декабрĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Декабрĕн 8-мĕшĕнче çĕрле, 11 сехет тĕлнелле, кăкăртан персе, красноармеец-шофера Бубен юлташа вилмеллех амантнă. Декабрĕн 9-мĕшĕнче Пĕтĕм тĕнчери çар трибуналне пулăшса тăракан Америка çарĕсен командующийĕн штабĕ Нюрнберг районĕнчи çар полицийĕн начальникĕн Клэйтон майорăн пĕлтерĕвне пичетлесе кăларнă. Пĕлтерӳре çапла каланă: Бубена «Гранд-Отель» çывăхĕнче кăкăртан пĕчĕк калибрлă пульăпа амантнă, вара вăл тăна кĕреймесĕрех вилсе кайнă. Халĕ ку ĕçе йĕрлеççĕ.

### ИТАЛИРЕ ÇĔНĔ ПРАВИТЕЛЬСТВО ТУСА ХУНĂ

РИМ, декабрĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Римри радио çапла пĕлтерет: паян ирхине де Гаспери Итали наместникне Умберто принца çĕнĕ правительство членĕсен списокне панă. Правительствăна çаксем кĕреççĕ: Альчиде де Гаспери — министрсен совечĕн председателĕ, ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ тата реконструкци тĕлĕшпе ĕçлекен комитетăн председателĕ; Пьетро Ненни—министрсен совечĕн вице-председателĕ тата Учредительнăй пуху тĕлĕшпе ĕçлекен министр; Эмилио Луссу—Канаш паракан пуху тĕлĕшпе ĕçлекен министр; Джузеппе Ромита—шалти ĕçсен министрĕ; Пальмиро Тольятти—юстици министрĕ; Мауро Скоччимарро—финанс министрĕ; Манлио Брозио—çар министрĕ; Рафаэле де Куртен—тинĕс министрĕ; Марио Чеволотто—авиаци министрĕ; Энрико Моле—сутĕç министрĕ тата ыттисем те.

### ХЕЛЬСИНКИ ХУЛИНЧИ МУНИЦИПАЛИТЕТА СУЙЛАНИН ИТОГĔСЕМ

ХЕЛЬСИНКИ, декабрĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Финляндири радио пĕлтернĕ тăрăх, декабрĕн 7-мĕшĕнче ирхине Хельсинки хулинчи муниципалитета суйланин татăклă итогĕсене пĕлтернĕ. Суйлавра 151.000 çын сасăланă, вăл пĕтĕм суйлавçăсен 62 проценчĕ пулать.

Хельсинки хулин çĕнĕ муниципалитетне сулахай партисенчен—26 депутат (унччен 24 депутат пулнă), коалициллĕ партирен—14 депутат, (унччен 3 депутат пулнă), шведсен халăх партийĕнчен 13 депутат (унччен 18 депутат пулнă), прогрессивнăй партирен—6 депутат (унччен 5 депутат пулнă) суйланă.

Сулахай партисенчен суйлана 26 депутатран 15 депутат ДСФН-ран, 11 депутат—социал-демократсем.

### ФИНЛЯНДИЕ ВĂРÇĂ ХУТШĂНТАРНĂШĂН АЙĂПЛĂ ÇЫНСЕНЕ МАЛАЛЛА СУД ТĂВАÇÇĔ

ХЕЛЬСИНКИ, декабрĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Декабрĕн 10-мĕшĕнче Финляндие вăрçа хутшăнтарнăшăн айăплă çынсене малалла суд тума пуçланă. Суд ларăвĕнче верховнăй судăн çĕнĕ председателĕ Оскар Меллер председатель пулнă.

Тĕп айăплаканĕ юстици канцлерĕ Тойво Тарьянне суда панă запискăра çапла калать: айăпланакансем, çав шутра президент пулнă Рюти, судра историпе тата географипе çыхăнса тăракан тĕрлĕ условисене пăхса тухасшăн; вăрçă пуçланăшăн айăплă çынсене маларах йышăннă закон тăрăх наказани парасси çинчен каласнă чухне çав условисене шута илме кирлĕ мар. Ĕçе улăштарма пултараймасăр, ыйтусене пăхса тухни суд ĕçне кирлĕ мар çĕртен тăсни çеç пулать. Таннер ытти çынсем тухса каланă сăмахсене вуласа пама хăтланни вырăнсăр ĕç пулать, мĕншĕн тесен Таннер, ертсе пыракан вырăнта ĕçлесе, общественность шухăшне ыттисенчен урăхларах улăштарнă.

Юлашкинчен Тарьянне çапла каланă: «Суд ĕçне йĕркеллĕ туса пырас тесе тата вăл хăйĕн тĕллевне пурнăçлама пултартăр тесе, ман шутпа, çакăн пек йĕрке йышăнмалла: айăпласа çырнине малтан кашни айăпланакан тĕлĕшпе уйрăм пăхса тухмалла. Айăпланакансем, айăпласа çырнă актпа тата ун çумне хушса хунă документсемпе паллашма пултарнăскерсем, кашни пункт пирки хирĕç калама пултарĕç. Кирек мĕн пулсан та, Рюти президент пирки тата директор-распорядитель Таннер пирки хам каласа панине шута илсе, эпĕ судран çапла ыйтатăп: вăрçă пуçланăшăн айăплă çынсем çинчен хăйĕн шухăшне суд малтанах палăрттăр; хӳтĕлекенсен аллине, судăн решенине улăштарма пултараймасăр, унăн ĕçне кирлĕ мар çĕртенех тăсма пултаракан материалсем памалла ан пултăр».

Суд ларăвĕ пуçлансанах Тарьянне Кивимякипе Таннера айăплама çĕнĕ материалсем панă. Кивимяки Берлинран пĕлтерсе тăни тата вăл çырнă отчетсем, çавăн пекех тата вăл сеймăн ют çĕршыв ыйтăвĕсемпе ĕçлекен комиссине сăмахпа кала-кала пани—правительствăна хăй йышăннă çулпа çирĕптерех пыма май панă. «Профессор Кивимяки, правительствăна пĕлтерсе тăрса, Финляндие 1941 çулта Совет Союзне хирĕç пыракан вăрçа хутшăнтарма пулăшнă, вăрçă пуçлансан, мир тума хытă кансĕрленĕ», тенĕ Тарьянне.

Çавăнпа та Тарьянне Кивимякие «хăйĕн ĕçлĕ вырăнĕпе усă курса, государствăна сиен кӳнĕшĕн наказани пама» ыйтнă.

Айăпланакан Таннерăн ĕçĕсем çинчен каласа, тĕп айăплаканĕ çакна аса илтернĕ: Таннер, сăмахсем тухса каласа, мир тума кансĕрлеме тăрăшнă. Вăл корреспондентсене каласа панисем те çав çулпах пынă. Таннер социал-демократсен партийĕнче, сеймра тата правительствăра аслă вырăн йышăнса тăнă пирки, вăл шалтипе тулашри политикăн уйрăмах пысăк вырăн йышăнса тăнă. Тĕп хваттерĕн çар управленийĕн отделĕ 1944 çулхи февральте, сăмахран, çапла çырнă: лару-тăру кăткăсланса кайсан, Финляндин ĕçĕсене туса тăракансем Таннерпа Вальден пулнă пулĕччĕç, тенĕ.

Министрсен советĕнче тĕп вырăн йышăнса тăрса, Таннер ют çĕршыв ĕçĕсен комиссине кĕмен чухне те тулашри политикăна хăйне кирлĕ пек тытса пыртарнă. Çавăнпа та вăл пысăк вырăн йышăнса тăнине тата унăн мĕнпур ĕçĕсене шута илсе, тĕп айăплаканĕ çакна çителĕклĕ палăртнă тесе шутлать: Таннер айăплама тивĕçлĕ ĕçсемпе йăнăшсемшĕн айăплă пулса тăрать, çав ĕçсемпе йăнăшсене айăпласа çырнă актăн 4-мĕш пунктĕнче тата 2-мĕш пунктĕнче кăтартса панă.

Тĕп айăплаканĕ Тарьянне Таннерă çав ĕçсемшĕн наказани пама ыйтать.

Микко Эрих адвокат чирленĕ пирки Таннер судра хăйне хăех хӳтĕлет.

—⊙—

### ВЕНГРИН ЮТ ÇĔРШЫВ ĔÇĔСЕН МИНИСТРĔ ПРАГĂРА

ПРАГА, декабрĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Çак кунсенче Прага хулине Венгрин ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Дьендьеши пынă.

Дьендьеши Чехословакин ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕн ĕçĕсене туса тăракан статс-секретарьпе Клементис докторпа курса калаçнă. Çавăн хыççăн Чехословакипе Венгри пĕр-пĕрин патне промышленность таварĕсем ярса тăрасси çинчен калаçма пуçланă.

Ответлă редактор **В. Я. ЯКОВЛЕВ.**

Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи Искусство управленийĕ Саратоври государство консерваторийĕнчи Чăвашсен опера студине вĕренме илет. Вĕренме кĕрес текенсен Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи Искусство управленийĕн начальникĕ ячĕпе 1946 çулхи январĕн 1-мĕшĕччен заявлени памалла.

**Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи Искусство управленийĕ.**

3—1.

РЕДАКЦИ АДРЕÇĔ: гор. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0-67, заместителĕн—2-89, секретариатăн—4-25, пропаганда пайĕн—2-89, парти пурнăç пайĕн—3-97, промышленность пайĕн—3-99, ял хуçалăх пайĕн—2-99, рабселькорсен пайĕн—0-67, издательство кантурин — 0-23.

НТ 00097 Тираж 16.000 экз.